*Н.М. МАТВЕЕВ,*
*Ф.М. Лукин музей директорĕ*

# ЁМĔР САККИ САРЛАКА, АНЧАХ ПУРНĂÇĔ КĔСКЕ...

Иртнĕ 2002 çулта эпир – 1933–34-мĕш çулсенче çуралнă ачасем – Çĕрпӳ районĕнчи Виçикассинчи вăтам шкула пĕтерни çур ĕмĕр çитрĕ. Калама кăна – çур ĕмĕр, анчах та вăшт! кăна, çил пек иртсе кайрĕ. Халĕ эпир çитмĕлсене çывхарса пыратпăр, ватăлатпăр ĕнтĕ.

1949 çулта 7-мĕш класс пĕтернĕ 150 ытла ача (вĕсем пурте Виçикасси таврашĕнчи ялсенче çуралса ӳснĕ) вăтам шкула илме заявлени çырса панă. Пĕтĕмпе тăватă класс йĕркеленнĕ: «а», «б», «в», «г». Пурне те илнĕ: пĕри – çăпатапа, пир сумкăпа; тепри лайăхрах тăханнă. Чăнах та, пурте вăтам пĕлӳ илме ĕмĕтленнĕ, усăллă çын пулас тенĕ. Эпир, хамăр енчисем – тĕрĕссипе каласан, малтан Виçикассинче вĕренменнисем – «б», «в», «г» классенче вĕренме тытăнтăмăр. Хăвăрт иртсе кайрĕ виçĕ çул. Пурте 10 класс пĕтерейменрĕç: кам çука пула, кам тăлăха юлса, кам вĕреннĕшĕн 150 тенкĕ тӳлеймен пирки ирĕксĕр вĕренме пăрахрĕç. 70 ачана яхăн кăна «пиçсе çитни» çинчен пĕлтерекен хут – аттестат илтĕмĕр. Ун чухнехи шкул директорĕ Шильдяков Федор Григорьевич пире алă парса, ырă сунса, мăн çул çине тухнă ятпа ăшă сăмахсем каласа ăсатрĕ.

Виçĕ çул хушши пирĕн класа Мясникова Фаина Ильинична ертсе пычĕ. Халĕ вăл Прокопьева хушаматлă, Çĕрпӳ хулинче пурăнать теççĕ. Саланса кайрăмăр вара эпир аслă çĕршыв тăрăх: кам яла юлнă, кам салтака ăсаннă, кам института вĕренме кĕнĕ. Эпĕ те усăллă çын пулас тесе Ленинград облаçĕнчи Выборг хулинчи çар инженерĕсен (строитель) училищине кайма военкомата хут çырса патăм, анчах та ман ыйтăва тивĕçтермерĕç. Пире, 100 ытла ачана, вагонсене лартса Канашран илсе тухса кайрĕç. Темиçе талăк кайнă хыççăн Казахстана, Павлодар хулине (ун чухне «Шефство комсомола над авиацией» юхăм пынă), пулас летчиксен шкулне илсе çитерчĕç. Кунта пуçтарăннă 900 ачаран икçĕрĕшне суйласа илсе вĕренме хăварчĕç. Хамăрах классене тунă, палаткăсенче пурăнса вĕреннĕ. Каçхине палаткăсенче сивĕччĕ: атăсем çумне пурттенккесем шăнса ларатчĕç. Ноябрьте «финн çурчĕсене» пурăнма куçарчĕç. Виçĕ çул хушши тĕрлĕ самолетпа вĕçме вĕрентĕмĕр, анчах та училище пĕтерес умĕн сывлăха пула мана 2 уйăхлăх пехотăна куçарчĕç, унтан киле ячĕç. Унтанпа 50 çул ĕнтĕ ялта пурăнатăп: трактористра, бригадирта, завхозра, агрономра, колхоз ертӳçинче ĕçлерĕм.

1987 çулта шкула пĕтерни 35 çул тултарнă ятпа Виçикасси шкулне пухăнтăмăр. Ун чух çĕнĕ шкулччĕ ĕнтĕ, пире вĕрентнĕ учительсем те çукчĕ. 20 çын ытларах кăна пуçтарăнтăмăр. Нумайччен иртнĕ вăхăтсем çинчен калаçса лартăмăр. Пĕр-пĕрне палласа илме те йывăр: кам кăвакарнă, кам «вырăсланса» кайнă. Ачалăх иртнĕ, çулсем хăйĕннех тăваççĕ... Хурăнвар, Елаш, Мамликасси, Пĕчĕк Ял, Виçикасси, Çĕньял ачисем Михайлов Николай, Кондратьева Рита, Васильева Аня, Прокопьева Федора учительсем пулса ĕçленĕ: Рита – ялта, Аня – Канаш районĕнчи Пикшик ялĕнче, Федора – Виçикасси ялĕнче. Миша Гурьевпа (Пĕчĕк Ял) Миша Трофимов (Малтикасси) Свердловск облаçĕнчи Иса хулинче техникум пĕтерсе геологсем пулса тăнă. Миша Гурьев Якути тăрăхĕнче ылтăн шыраса 45 çултах ватă старик пулса таврăнчĕ: шахта хăйĕн ĕçне тунă. Халĕ вăл çук... Миша Трофимов те Ирака, те Ирана самолетпа вĕçнĕ чух аварие лексе вăхăтсăр çут тĕнчерен уйрălнă.

Костя Павлов (Çĕньял) Хусанти институтран вĕренсе тухсан Шупашкарти пĕр заводрах инженер-конструктор пулса пĕр улшăнмасăр ĕçлерĕ, пĕрле вĕреннĕ Виçикасси хĕрĕпе Раиса Матвеевăпа (учитель) пĕрлешсе халĕ те йĕркеллĕ пурăнаççĕ.

Полайкасси каччи Гена Бородин летчиксен училищине пĕтерчĕ, граждан авиацинче ĕçлерĕ, яла таврăнсан мĕн юлашки кунччен ял хуçалăхĕнче ĕçлесе пурăнчĕ.

«Çĕньял» ял хуçалăх специалисчĕсем Миша Николаев, Гена Филиппов çуралнă вырăнтах кирлĕ пулчĕç. Гена чылай çул хушши тăван колхозра председатель пулса ĕçлерĕ. Ырă кăмăллă, тараватлă çывăх юлташăм нумай пурăнаймарĕ, пурнăç йывăррине чăтаймасăр хăй ирĕкĕпе пурнăçран уйăрăлса кайрĕ.

Костя Васильев инженер-механизатор пулса тăван яла юлчĕ, Федора Прокопьевăпа пĕрлешсе çемьеллĕ пулчĕç, ача-пăчаллă. Анчах та иртерех пĕччен хăварчĕ вăл Федорăна...

Апакасси, Анатри ял, Кипекçе тăрăхĕнчен – 10-12 çухрăмран шкула çӳрекенсем те пурччĕ. Вĕсенчен пĕри – Мосин Нил Андреевич – профессора тухса нумай çул хушши ĕçлесе пурăнчĕ.

Щеглов Гриша, Ксенофонтов Толя, Воротников Леша тĕрлĕ вĕренӳ заведенийĕсене пĕтерчĕç. Гриша Щеглов Мускаври авиаци институтне вĕренме кĕнĕ, пĕтерсен Мускава юлнă (ăна пĕрре те курман, шкулта чи лайăх вĕренекенччĕ, пĕр «4» паллă кăна пулнă). Тольăн пурнăçĕ çамрăклах татăлчĕ. Манăн чи çывăх, ырă кăмăллă юлташăм Леша Воротников (яланах ун питĕнче кулăччĕ) хăйĕн пурнăçне, ăс-хакăлне çар ĕçне пачĕ. Вырăс хĕрне качча илчĕ, отставкăна тухсан Шупашкара таврăнчĕ. 3-4 хутчен курса нумай калаçрăмăр. Ăçта эсĕ, Леша? Сассуна пар.

Хĕрсем – Семенова Римма (Çĕлескер), Мефодьева Таисия, Никитина Мария – тĕрлĕрен специальность илсе яла юлнă, çемье çавăрнă. Мĕнле пурăнаççĕ – паллă мар.

Гена Федоров тинĕс капитанĕ пулса тăнă, тăванĕсем часах ялта пулассине пĕлтерчĕç.

Веня Геннадьев Краснодарти институтран вĕренсе тухсан унтах пĕр хупă ял хуçалăх институтĕнче ĕçлеме юлнă. Вася Мастеров Пермь хулинче пурăннă хыççăн тăван енне таврăннă.

Марка ачисем – Митя Александров, Ваня Андреев ялтах ĕçлесе пурăнаççĕ. Ишек пасарĕнче час-часах тĕл пулаттăмăрччĕ. Шупуç енчи Леня Леонтьев, Гена Васильев, Мимоза Репина пирĕнпе пĕрле вĕреннĕ. Леня Леонтьева çур хула пĕлнĕ. Вăл – чаплă сехет ăсти, çĕрĕсем туса парса нумай çамрăка савăнтарнă. Мимоза Хусанти медицина институтне пĕтерсен Саратов облаçĕнчи пĕр колонинче врач пулса ĕçленĕ, анчах та усал шухăшлă çынсем çамрăк хĕре çĕçĕпе чиксе унăн кун-çулне кĕскетнĕ.

Çĕнĕ Выселка ялĕнчен çак шкула эпир виçĕ Коля – Степанов (Павлов), Прокопьев, Лукин (Матвеев) тата Вера Васильева пĕтертĕмĕр. Коля Степанов çар училищи, кайран академи пĕтерсе Уралта военпред пулса ĕçленĕ. Отставкăна тухсан Мускавра пурăнма шутланă вăл, анчах та виçĕ инфаркт хыççăн инвалид пулса тăчĕ (эпĕ ăна Мускаври пĕр лазаретра шыраса тупрăм), хăйĕн юратнă Светлана мăшăрĕнчен уйрăлса кайрĕ.

Коля Прокопьев – чăн-чăн моряк, вырăс хĕрне качча илсе Шупашкара куçса килчĕ. Хăйĕн пĕтĕм кун-çулне, вăй-халне ЖБК-9 завода парса ĕçлерĕ. Пулать вĕт, ют çын вырăнне унăн çут тĕнчерен уйрăлма тиврĕ: тăван çурт подъездĕнче чунсăр çынсем çĕçĕпе чиксе вĕлернĕ.

Вера Васильевна Васильева качча тухиччен Шупашкарта пир-авăр комбинатĕнче ĕçленĕ. Хăйĕн тăван ялне килсе яланах амăшне пулăшатчĕ. Шăпах унпа – пĕрремĕш класран пуçласа 10-мĕш класс пĕтеричченех пĕрле вĕреннĕ Вера Васильевнăпа (халь те ăна çапла чĕнетĕп) – эпĕ хамăн пурнăçа çыхăнтартăм. Эпир унпа пилĕк ача çитĕнтерсе пурнăç çулĕ çине кăлартăмăр, хамăр мăнуксем яла килсен вĕсемпе киленетпĕр.

Пĕрле вĕреннĕ туссем! Кам çак статьяна вулать, çырăр, тупăр, пĕрле вĕреннисене пĕлтерĕр, ман патăма çырăр. Туссен çывăх тăванĕсем, эсир те çырăр. Тав тăватăп.